# ААЛЫ ТОКОМБАЕВ

*Киргизи*

## ТĂВАН ÇĔРШЫВ ТЕЛЕЙĔ

Ăшă ытла пехиллерĕн пире эс,
Мăшăр çунат хушрăн кăмăл çумне.
Вăй вĕрсе кӳртрĕн имшер ӳт-тире эс,
Пурăнăç патăн киргиз халăхне.

Амăшĕ пулчĕ Россия киргизшăн,
Савăнчĕ чун, ялтăртатрĕç куçсем.
Йăл кулса ячĕ çĕршывăмăр ăшшăн,
Çĕнĕ кун-çул çеçенхир хуçисем.

Шурă калпак тăхăнса ĕмĕр-ĕмĕр
Ларнă Тянь-Шань тăвĕсем тĕлĕрсе.
Халь сăрт çинче ешерет сад пĕр вĕççĕр,
Тăчĕ юратнă çĕршыв чĕрĕлсе.

Кайăк пăхать те çӳлтен тĕлĕнет-мĕн:
„Ту та тип çиллчĕ авал ку тĕлте,
Халĕ — курсамăр, епле илемлетнĕ, —
Орто-Токой — çĕнĕ кӳлĕ пур!“ тет.

Ту-сӑрт ҫинче ялкӑшать кунӗн-ҫӗрӗн
Ҫын ҫутнӑ ҫӑлтӑр, машина чупать.
Ирӗклӗ сывлӑшпала — Тӑван Ҫӗрӗн
Сывлӑшӗпе — пирӗн халӑх сывлать.

Парти, пире эсӗ туслӑхӑн, мирӗн
Чӑн саккунне уҫса патӑн ярах.
Кам-ха писатель, ученый халь пирӗн?
Ӗлӗк вӑл пулнӑ кӗтӳҫӗ анчах.

Ҫыншӑн ӗҫлет юхан шыв пархатарлӑн,
Вӑй антарать ун валли ту ҫинчен.
Кам ҫав шыва ҫӗнтерсе парӑнтарнӑ?
Юртӑра ӳснӗ ҫынах вӑл иккен.

„Лайӑх лаша — вӑл арҫыннӑн ҫуначӗ"
Тенӗ тахҫан авалах киргизсем.
Халӗ туран та ҫӳлте явӑнаҫҫӗ
Хамӑр туса вӗҫтерен кайӑксем.

Ват асаттешӗн хисепӗ сахал-и?
Вӑл, сухалне якатса, пӑхкалать:
Кам самолет рульне тытӗ-ши халӗ?
Юртӑра ӳснӗ мӑнукӗ тытать!

Чӗрӗлӗх шывӗ пире эс ӗҫтертӗн,
Ӑслӑ та, вӑйлӑ та турӑн пире.
Парти, Тӑван Ҫӗршыва эс ҫӗклерӗн,
Эсӗ — телей, пур чӗрешӗн чӗре!

1954